Выльăх-чĕрлĕх отраслĕн 2007 çулхи ĕç пĕтĕмлетĕвĕ

# Мал туртăмлă ĕçлеме майсем пур

Çакна çирĕплетрĕ иртнĕ юн кун, февралĕн 20-мĕшĕнче, районти обществăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсен иртнĕ çулхи ĕç кăтартăвĕсене тишкерсе хак пани.

Канашлу район центрĕнчи Культура çуртĕнче иртрĕ. Çанталăк çур еннелле сулăннинне кăтартса хĕвел пăхни, канашлăва пыракансен пит-куçĕсенче савăнăç шевли выляни выльăх-чĕрлĕх пăхакансем ума лартнă тĕллевсене пурнăçлани, çĕннине вăй пама хатĕрри пирки каланăн туйăнчĕ. Туйăнни тĕрĕсе килчĕ.



– Патшалăх çĕр ĕçченĕ çине çаврăнчĕ. Вăл паян ĕçлекене май пур таран пулăшать. Çак пулăшу пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем, килти хушма хуçалăхсем çине те пĕр пек валеçĕнет. Çакă конкурентлăха ӳстерчĕ. Çакă вара малашлăха ярса пуснă черетлĕ утăм пулчĕ. Пур формăллă хуçалăхсем иртнĕ çул пĕтĕмпе 350 миллион тенкĕлĕх продукци туса илчĕç. Çав хушăрах мал туртăмлăрах ĕçлекенсем ытларах та тума май пурри пирки хăйсен ĕç кăтартăвĕсемпе çирĕплетеççĕ. Акă 18 çын хăйсен ушкăнĕсенчи ĕнесенчен кашнинчен 5 пин кг ытла сĕт сурĕ, 44-шĕ – 4 пин кг ытла. Сĕт сăвассипе эпир республикăра пĕрремĕшсем пулсан, аш-какай туса илессипе иккĕмĕш вырăнта. Çак ĕçсенче çĕнĕ технологисене алăк уçнин тĕрĕслĕхĕ курăнать. Кам çĕннипе туслă – унăн кăтартăвĕсем те сумлă, – терĕ канашлăва уçса район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов.

Чăнах та, район ертӳçи каланă докладра çĕнни пайтах пулчĕ. Апла пулсан эпир те ĕçлеме пултаратпăр.

2007-мĕш çулта район чĕрĕ виçепе пурĕ 2925,3 тонна (иртнĕ çулхипе танлаштарсан 104 процент) аш-какай, 11646,7 тонна сĕт туса илнĕ. Усă куракан 100 гектар çĕр пуçне 66,4 центнер аш-какай, (иртнĕ çулхипе танлаштарсан 3 центнер ытларах), 264,5 центнер (иртнĕ çулхипе танлаштарсан 93 процент) туса илнĕ. Аш-какай комбинатне сыснасем 85 килограмм, мăйракаллă шултра выльăхсем вăтамран 346 килограмм чĕрĕ виçепе ăсаннă. «Восток», «Оринино» хуçалăхсенчен 422-447-шер виçеллĕ выльăх кайнă. Çав хушăрах пĕчĕк виçеллĕ, кондицие ларман выльăх сутса хуçалăх кассине хушма тупăш илеймен хуçалăхсене асăнса хăвармалла: çитĕнсе çитмен выльăха аша ăсатса, аш-какай туса илесси районти вăтам кăтартуран «Лидер», «Передовик», «Сеятель», «Рассвет», «Волга», К. Иванов яч. хис., Чапаев яч. хис., хуçалăхсенче пĕчĕк. Кашни ĕнерен районĕпе вăтамран 3689 кг сĕт сунă пулсан, çав хушăрах «Восток», Ильич яч. хис., Суворов яч. хис., Чкалов яч. хис., «Оринино», «Свобода», «Ударник», «Лидер» хуçалăхсем 3500 кг ытла сума пултарнă. «Герой» хуçалăх вара кашни ĕнерен 5035 кг сĕт сума пултарчĕ. Анчах та, виçĕм çулхипе танлаштарсан, кашни ĕнен продуктивлăхĕ пĕлтĕр Ленин яч. хис. (1165 кг), «Чемеево» (1064 кг), «Рассвет» (798 кг), «Лидер» (782 кг), «Передовик» (772 кг), Е.Андреев яч. хис. (548 кг), «Волга» (343 кг), «Свобода» хуçалăхсенче (255 кг) чакнă. Районĕпе 2 пин килограмран сахалтарах сăвакан хуçалăхсем иккĕ: «Сеятель» (1838 кг), «Передовик» (1917 кг).

Ӳсĕм тумалли сăлтав - вырăнта йĕрке пулни, руководительпе зооветспециалистсем, заведующисемпе выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсем пĕр чĕлхе тупса кал-кал ĕçлени. Çавăнпа та ĕнтĕ ăçта йĕрке пур, специалистсем вырăнта, унта ӳсĕмсем те куç умĕнче.

Выльăх-чĕрлĕхрен ытларах продукци туса илес тесен, ăна вăхăтра пахалăхлă апатпа тивĕçтермелле. Анчах... Çуллахи вăхăтра кĕтĕве симĕс апатпа тивĕçтерессине аван йĕркеленĕ пулсан, хĕллехи тапхăра кашни условнăй выльăх пуçне 15,9 центнер çеç апат единици хатĕрленĕ. Ку кирлĕ шайăн 57 процентĕ. Апат пахалăхне илес пулсассăн: I кл. утă – 26 процент, II кл. – 45 процент, III кл. – 24 процент, класа ларманни – 5 процент. Силос вара I класли пачах çук, II кл. – 68 процент, III кл. – 32 процент. Выльăх валли янтăланă концентратлă апат мĕн кирлин 62 процентĕ кăна. Çавăнпа та ĕнтĕ хĕллехи тапхăрта выльăхсенчен продукци илесси те чаксах пырать.



Выльăхсене тĕрлĕ йышши макро-, микроэлементсемпе, хушма хутăшсемпе пуянлатнă рационпа тăрантарман пирки, çамрăк выльăхăн кулленхи ӳт хушаслăхĕ те пĕчĕк.

Самăртма хупнă вăкăрсем талăкра 722 грамм ӳт хушнă. «Свобода» хуçалăхăн Йӳтĕркассинчи вăкăр ферминче Г. Белов ертсе пыракан комплекслă бригадăра талăкра выльăхсем 1054 грамм ӳт хушнă, «Оринино» хуçалăхра – 1048 грамм, Суворов яч. хис. хуç. – 901 грамм, «Востокра» – 884 грамм. Çав вăхăтрах К.Иванов яч. хис. хуçалăхра вăкăрсем талăксерен 204 грамм, «Передовикра» 359 грамм кăна ӳт хушнă.

Сыснасен ӳт хушаслăхĕ те расна. Кулленхи çак кăтарту Е.Андреев яч. хис. (140 грамм), «Передовикпа» «Хлебороб» (210 грамм), Чапаев яч. хис. хуçалăхсенче (169 грамм) пулсан, çĕнĕ технологипе усă курса «Восток» (366 гр.), «Оринино» (439 гр.), «Герой» (375 гр.), «Ударник» (480 гр.), Суворов яч. хис. (320 гр.), «Свобода» (413 гр.) хуçалăхсем аван ĕçлесе пыраççĕ. Самăртма хупнă сыснасем районĕпе вăтамран 468 грамм ӳт хушнă. Суворов яч. хис. хуçалăхри Алина Валерьяновна Филипповапа Светлана Леонидовна Яковлева пăхакан сыснасем талăксерен 780 грамм ӳт хушнă, «Агро-Урожайра» – 557 гр., «Орининора» – 556 грамм, «Ударникра» 459 грамм ӳт хушнă пулсан, Чапаев яч. хис. (200 гр.), «Передовик» (194 гр.) хуçалăхсен вĕренмелли нумай. Ахальлĕн ăçта ĕнтĕ кунта хуçалăх кассине хушма тупăш кĕресси?

Районĕпе 2981 пуç пăру, çав шутра ĕнесенчен 2492 пăру илнĕ, 100 ĕне пуçне 79 пăру. Ку начар кăтарту. Аван ĕçлекен хуçалăхсенче, тĕслĕхрен, Суворов яч. хис. – 100 ĕне пуçне 100 пăру (осеменаторĕ – Фаина Николаевна Максимова), Ленин яч. хис. хуçалăхра – 95 пăру (Калерия Петровна Дмитриева), «Геройра» – 91 пăру (Валентина Алексеевна Леонтьева) илнĕ пулсан, «Сеятельте» 32 пуç, «Орининора» 58, «Передовикра» 60, «Рассветра» 61, Чапаев яч. хис. хуçалăхра 59, Е.Андреев яч. хис. хуçалăхра 69 пăру кăна илнĕ. Пăру сахал илнин сăлтавĕсем – зооветспециалистсем çукки, кадрсем час-час улшăнни, фермăсенче ветеринарипе санитари енчен йĕрке çукран час-часах тислĕк кăлараймарни, чир-чĕр хуçаланни, рацион чухăн пулни, апат пахалăхĕ начарри, выльăха тăрантарса çитерейменни, кĕтĕве вăхăтра çĕнетменни.

Кĕтĕве çĕнетессипе пĕлтĕр «Восток» (30 пуç), Ильич яч. хис. хуçалăх (33 пуç) аван ĕçленĕ пулсан, «Передовик» (7 пуç), Чапаев яч. хис. (2 пуç), «Лидер» (4 пуç) хуçалăхсем начар ĕçленĕ тесе палăртмалла.

Районĕпе 20635 пуç сысна çури илнĕ, унччен хи çулхинчен 6694 пуç сахалрах. Продуктивлăх чакнин сăлтавĕсем – тĕш тырă сахал пулни, амасен пуçне чакарни.

Муркашри чăх-чĕп фабрики çултан-çул пысăк çитĕнӳсем тăвать. Иртнĕ çул 47 миллион та 284 пин çăмарта (104,8 процент), пĕр чăхран 315 çăмарта илнĕ. Светлана Васильевна Любимова чăх пăхакан предприятире 33 çул ĕçлет. Вăл пĕлтĕр хăй ушкăнĕнчи чăхсенчен 2 миллион 880 пин çăмарта, пĕр чăхран 317-шер çăмарта илнĕ.

«Герой» хуçалăхри сурăх пăхакансем кашни сурăхран 4,5-шер кг çăм каснă, 100 сурăхран 103 путек илнĕ, Мичурин ячĕпе хисепленекен хуçалăхри Василий Ильич Яковлев утарçă 1 тонна та 740 кг пыл туса илнĕ, сутлăх пыл 1 вĕллерен 29 килограмм.

Районĕпе ăратлă мăйракаллă шултра выльăх 179 пуç (106,5 процент) сутнă, сыснасем – 602 пуç (32 процент), сурăхсем – 18 пуç. Кĕтĕве çĕнетме районĕпе 196 пуç ăратлă сысна илнĕ.

Выльăх-чĕрлĕх продукцине туса илнĕ çĕрте районти ветеринари службин тӳпи те пысăк. Тĕп тĕллевсенчен пĕри – ветеринари енчен хăрушсăрлăх тата пысăк пахалăхлă продукци туса илесси, район территорине ерекен чирсем пырса кĕресрен сыхласси пулса тăрать. Çак тĕллеве пурнăçласа ветеринари службăи 2007 çулта районти хуçалăхсенче эпизоотиллĕ лару-тăрăва (туберкулез, бруцеллез, çĕпĕр язви, чума, грипп чирĕсем енĕпе) ăнăçлă тытса пынă.

Ветеринари специалисчĕсем хушшинче 2007 çулта Шурчари ветучасток заведующийĕ Татьяна Ильинична Львова палăрса ĕçлерĕ. Çавăн пекех Ильинкăри ветучасток заведующийĕ Альбина Геннадьевна Ялтеева, Суворов яч. хис. тата «Герой» хуçалăхсен тĕп ветеринари врачĕсем Ирина Хрисановна Михайловапа Валентина Александровна Тимофееванa лайăх енĕпе асăнмалла.

2008-мĕш çулта патшалăх пулăшăвĕпе анлăн усă курса, районти выльăх-чĕрлĕх пăхакансем çĕнĕ çитĕнӳсем тăвасса шанас килет.

**А. БЕЛОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**




Çамрăклăх

# *Кадетсем – çĕршывăн пулас хӳтĕлевçисем*

Кадетсен юхăмĕ çамрăк-ха. Республикăра вăл 2006 çулта пуçăнчĕ. Çав çул республика Вĕрентӳпе çамрăксен политикин министерстви кадет шкулĕсемпе кадет класĕсене йĕркелесси пирки ятарлă хушу кăларчĕ. Çапла вара 2006 çулхи апрель уйăхĕнче Муркаш лицейĕнче те кадет енĕпе лицее вĕренме илме конкурс пулчĕ. Çав çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнче 5 яшпа 2 хĕртен кадетсен ушкăнĕ йĕркеленчĕ.

2006 çулхи октябрьте кадетсем хăйсен юлташĕсем, ашшĕ-амăшĕсем, учительсемпе чĕннĕ хăнасем умĕнче савăнăçлă лару-тăрура тупа турĕç. Ку мероприяти районти Культура çурчĕн сцени çинче иртрĕ.

Кадетсене вĕрентме кадет класĕ пирки ятарлă положени туса хатĕрленĕ. Профиль предмечĕсенчен кунта вĕсем «Çар службин тытăмĕ», «Право сыхлавĕн ĕçĕ-хĕлĕн тытăмĕ» предметсене вĕренеççĕ. Кадетсен хăйсен девизĕ, хăйсен символики, хăйсен Гимнĕ, ялавĕ, штандарчĕ пур.

Пĕтĕм вĕренӳ çулĕ вăхăтĕнче кадетсем лицейра ирттернĕ пур мероприятисене те, районти тата республика пĕлтерĕшлĕ мероприятисене те хутшăннă.

2007 çулхи майăн 5-мĕшĕнче Канаш хулинче май уйăхĕнчи пысăк пĕлтерĕшлĕ уявсене халалласа кадет класĕсемпе кадет шкулĕсенче ăс пухакансен республикăри слет-фестивалĕ иртрĕ. Ку слетра командирсен конкурсĕнче пирĕн кадет ушкăнĕн командирĕ Ким Лукин 2-мĕш вырăн йышăнма пултарчĕ.

Иртнĕ çулхи майăн 17-мĕшĕнче районти «Зарница» тата «Орленок» вăййăсене хутшăнтăмăр. «Çарпа патриотика клубĕсем» номинацире Муркаш лицейĕн кадечĕсем 3-мĕш пулчĕç.

Июнĕн 22-26-мĕшĕсенче Етĕрне хулинче республикăри çамрăк армеецсен республикăри «Орленок» 39-мĕш усă финал вăййисем иртрĕç. Муркаш лицейĕнчи кадетсем «Кадетсен класĕсем» номинацире вăй виçрĕç. Çуллахи шăрăхра пилĕк кун ăмăртни сая каймарĕ. Пирĕн команда 2-мĕш вырăн çĕнсе илме пултарчĕ.

2007 çулхи август уйăхĕнче Чăваш Республикин вĕрентӳпе çамрăксен политикин министрĕ «Республикăра сăнавлă площадкăсем йĕркелесси çинчен» хушу кăларчĕ. Çак хушупа килĕшӳллĕн Муркаш лицейĕнче кадетсен класне йĕркелессипе республикăри сăнавлă педагогика площадкине уçнă. Пуçласа кунта кадетсен класне туса хунă. Халĕ кадетсем 23-ĕн ĕнтĕ. Вăл шутран хĕрсем 10-ăн, яшсем 13-ĕн. Пур кадетсем те ятарлă пĕр пек тумтирпе çӳреççĕ.

2007 çулхи октябрĕн 19-мĕшĕнче «Кадета йышăнни» мероприяти ирттертĕмĕр. Унта Раççей Федерацийĕн наркотиксем енĕпе ĕçлекен федераллă службин управленийĕн Чăваш Республикипе ĕçлекен пуçлăхĕ, полици генерал-майорĕ В.Н. Сивцов, ача-пăчасен полици академийĕн пуçлăхĕ, полици полковникĕ С.В. Чехов та пулчĕç.



Пĕлтĕр ноябрĕн 3-мĕшĕнче Çĕнĕ Шупашкар хулинче кадет класĕсем хушшинче стройпа утассипе республикăри смотр иртнĕччĕ. «Кадетсен 2007 çулхи кĕрхи тĕрĕслевĕ» ятлă пулчĕ вăл. Унта Муркаш кадечĕсем республикипе 1-мĕш вырăн çĕнсе илме пултарчĕç. Судьясем уйрăмах стройпа утнă чухне тунă хусканусене пысăк хак пачĕç.

Канаш хулинче иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕн пуçламăшĕнче кадет класĕсем хушшинче балл ташшисем ташлассипе «Георгиевски балл» республикăри конкурс иртрĕ. «Балри чи лайăх мăшăр» номинацире пирĕн кадетсен мăшăрĕ виççĕмĕш пулчĕ. «Эпир Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсен ĕçне тăсакансем» конкурс-презентацире пирĕн кадетсем Раççей Геройĕ Евгений Борисов пирки каласа пачĕç, иккĕмĕш призлă вырăн йышăнма пултартăмăр.

Асра юлмалли татах сахал мар пулчĕ пĕлтĕр. Акă, Раççей Федерацийĕн наркотиксем енĕпе ĕçлекен федераллă службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче пулнинех илер-ха. Кунта кадетсем занятисем ирттерчĕç, унти музейра пулса курчĕç, çĕнĕ йышши хĕç-пăшалпа паллашма пултарчĕç. Кунтах вăйă спорчĕсен тĕсĕсем енĕпе спартакиада иртрĕ. Мини-футбол, баскетбол, волейбол енĕсемпе вăй виçрĕмĕр асăннă федераллă службăн ачасен полици шкулĕнче вĕренекенсемпе. Муркашсем пур енĕпе те пĕрремĕшсем пулчĕç, кубок çĕнсе илчĕç.

Раççей Геройĕпе Евгений Борисовпа тĕл пулу ирттертĕмĕр. Чечен вăрçин хăрушă саманчĕсем пирки каласа панине пурте шăппăн итлесе ларчĕç. Асăннă вăрçă нумай çыншăн пурнăç тĕрĕслевĕ пулса тăчĕ вĕт-ха. Пысăк пĕлтерĕшлĕ урок вăл пирĕншĕн – аннесене юратасси. Герой пире куççене уçма пулăшрĕ: атте-аннене сыхламалла, вĕсемшĕн ырă кăмăл шеллемелле мар.

Январьте пирĕн кадетсем лицей команди шутĕнче Чăваш патшалăх университечĕн лицейĕсемпе командисем хушшинчи спартакиадăна хутшăнчĕç. Кунта та пирĕн лицеистсем маххă памарĕç, университетăн кубокне çĕнсе илчĕç.

Ырă ĕçсем, тĕллевсем татах çук мар-ха. Çитĕнӳсем малашне те ӳссе пыччăр тесе хамăртан мĕн килнине пĕтĕмпех тăвас тетпĕр.

**Г. ЛУКИН,**
**кадетсен командирĕ.**